**Выльăх-чĕрлĕх отрасль аталанăвĕн пуçламăш утăмĕсем**

# Ăратлăх – выльăх пăхаканăн кулленхи тивĕçĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

М. Игнатьев калаă сăмахсем выставкăн пĕтĕм ĕçне сăнларĕç, малтуртăмлă



**Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Т. АЛЕКСЕЕВА зоотехникпа Чкалов яч. хис. хуçалăх ертӳçи выставкăра.**

ĕçлекенсен пултарулăхне хакларĕç. Министр сăмахĕсенчен çĕнĕ технологисене хальтерех алла илсен пирĕн кашни ĕнерен вăтамран 6 пин килограмм сĕт сума паян пур майсем те çителĕклĕ. Сысна ĕрчетесси тĕнче шайне тухать пулсан, чăх-чĕп отраслĕ пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ ыттисемшĕн тĕслĕх шайĕнче.

Министр каланине хамăр район кăтартăвĕсем çине куçарса пăхар-ха. Хăйĕн сăмахĕнче Михаил Васильевич Муркашсене хакласах ка-



**«Свобода» хуçалăхран ăратлăх куравне хутшăннă Э. Любимова, М. Майорова, Ю. Петровский, Р. Арапкина.**

ларĕ тейĕн. Пирĕн хуçалăхсем кăçалхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне ăратлă выльăхсен ама кĕтĕвне тытса тăма çакăн чухлĕ укçа-тенкĕпе усă курнă: ĕнесем валли Раççей бюджетĕнчен 4372500 тенкĕ илнĕ, Чăваш Республикин бюджетĕнчен – 1312 пин тенкĕ; сыснасем валли РФ бюджетĕнчен 864300 тенкĕ пулсан, ЧР бюджетĕнчен – 259290 тенкĕ. Кунсăр пуçне пысăк продуктивлăхлă ĕнесене пăхса тăма – 2839 пин тенкĕ. Ку вăл çулсерен ăратлăхпа ĕçленин пĕр пайĕ кăна-ха. Çакна палăртма кăмăллă: районта ăратлă выльăхсем ĕрчетессипе виçĕ хуçалăх завод шайĕпе ĕçлет («Свобода» сыснасемпе тата ĕнесемпе, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх сыснасемпе, «Ударник» мăйракаллă шултра выльăхсемпе), «Оринино», «Герой», Суворов яч. хис хуçалăхсем ăратлă выльăх репродукторĕсем шутланаççĕ. Вĕсемпе пĕрлех «Моргаушская» чăхчĕп фабрики те ăратлăхпа ĕçлесе, çĕнĕ технологисене вăхăтра алла илнипе производствăна тĕнче шайне кăларчĕ. Халăх хуçалăхĕнче паян ыранхине пăхса тунă кашни утăм ылтăн пĕрчипех танлашать. Асăннă хуçалăхсемпе тачă ĕçлесех ĕнтĕ районти ытти хуçалăхсем те производствăна çӳллĕ шайра тытса пыма мехел çитереççĕ. Пĕтĕмлетӳ – Муркашсем нумай кăтартусемпе ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне. Çакна курава çӳлти 7 хуçалăхпа пĕрле хутшăннă килти хушма хуçалăхра «Зааненская» ăратлă качакасем ĕрчетекен Л. Капировапа «Тульские бойцовые» ăратлă хурсем тытакан Р. Потапов маçтăрсем те аван кăтартса пачĕç. Кунта килнĕ «Моргаушкорм» чикĕллĕ яваплăхлă общество та пухăннисене хăйсем патĕнче выльăхчĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк валли паха апат хатĕрлеме май пуррине туллин кăтартса пачĕ. Вĕсен сĕнĕвĕсемпе тата ĕç мелĕсемпе паллашакансем те куравра чылайăн пулчĕç.

Курав хамăра тивĕçлĕ енчен кăтартма пирĕн пур майсем те çителĕклине «Свобода» хуçалăх илсе тухнă ăратлă сысна çурисем пурте сутăнса пĕтни урлă та курăнать. Ăратлăхпа ĕçлекенсем тата выльăх-чĕрлĕхпе чăхчĕп ĕрчетес çул çинчи хуçалăхсем асăннă выставка ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ, мĕншĕн тесен шăпах çакăнта вĕсем вăл е ку ăратăн ырă енĕсене курса пулас ĕçсене тата продуктивлăха планлаççĕ. Çакă хамăр районти Чкалов яч. хис. хуçалăх ертӳçи П.Г. Ефимов сăмахĕнчен те лайăх курăнать.

– Ял хуçалăхĕнче сĕт туса илни рентабеллĕрех пулнăран хамăр хуçалăх валли ăратлă тынасем туянас тетпĕр. Çак выставка кунта пирĕншĕн – пысăк пулăшу. Пирĕн шухăшсем паян вырăнлăн çирĕпленчĕç кăна, – терĕ Павел Геннадьевич курав вĕçĕнчи тĕл пулура.

– «Тульские бойцовые» ăратлă хурсемпе пĕрремĕш çул мар ĕçлетĕп, анчах вĕсене çакнашкал пысăк шайра кăтартăп тесе шутламан. Манăн хурсене туянассипе те калаçакансем пулчĕç. Пыраççĕ пулсан, тархасшăн. Ăратлăх тенин пĕр картара пулмалла мар, – хакларĕ ку-



**«Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Н. Ванеркин (сылтăмри) ăратлă выльăхпа кайăк-кĕшĕк куравĕпе кăмăллă.**

рав ĕçне Р. Потапов.

– Сирĕн шухăшпа килĕшетĕп. «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ял хуçалăхне ырă улшăнусен варкăшне илсе çитерчĕ. Ыранхи куна пăхса ĕçлекен валли паян пур условисем те пур, патшалăх пулăшăвĕ те айккинче тăмасть. Ял хуçалăхĕнчи ӳсĕм çулĕнче ăратлă выльăх çĕнĕ аталану уçать. Ял хуçалăхне аталантарма пăхнă наци проекчĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене çеç мар, килти хушма хуçалăхсене те аталанма тĕкĕ парать. Унпа усă курассине хамăр тĕллевре куратпăр, – терĕ пирĕн калаçăва малал-



**«Свобода» ăратлă выльăх ĕрчетекен заводри сысна амисем çулленех пысăк тухăçпа савăнтараççĕ.**

ла тăсса Лариса Анатольевна Капирова.

Пирĕн выльăхсем çине курава пынисем ăмсанса пăхнине сăнама вара питех те кăмăллă пулчĕ. Кăçал выставкăра Муркашсем вуннăн пулчĕç пулсан, пĕлтĕр вĕсен йышĕ 8 пулнăччĕ. Апла Муркашсем пĕр вырăнта тăмаççĕ.

«Чувашское» ăратлăх пĕрлешĕвĕн территорийĕнче пиллĕкмĕш хут иртнĕ ăратлă выльăхсен выставкинче Чăваш Республикинчи выльăхсен малашлăха шантаракан чи лайăх пайĕ пулчĕ. Тирпейлĕ вырăнта йĕркеленĕ пĕчĕк мар пӳлĕмсенче-картасенче вырăн йышăннă ăратлă ĕнесем, тынашкасем, лашасем, понисем, буйвол, сысна амисемпе çурисем, канлĕ выртакан сысна аçисем, курса çӳрекенсене куçран пăхакан сурăхсемпе качакасем, чăхсемпе автансем, путенесем, хурсемпе кăвакалсем, фазансем (сунара çӳремеллисем, Румыни ăратлисем, кĕмĕл тата ылтăн тĕслисем), цесаркăсем, кăрккасемпе турткăшсем (павлинсем), бассейнра ишекен тĕрлĕ тĕслĕ пулăсем... Кашнин патĕнчех ăратăна ăнлантарса тата выльăхран мĕнле тата мĕн чухлĕ продукци туса илме май пуррине ăнлантарса çырнă пĕчĕк стендсем, выльăхсемпе ĕçлекенсем. Выльăх-чĕрлĕх аталантарас ĕçре малашлăха ăратлă выльăхсемпе ĕçлессинче куракансем валли пурте пур: кур, вĕрен, килĕшӳ ту та ĕçле.

Выставкăпа пыратăп. «Свобода» хуçалăхăн пысăк шурă сысна ăратин вырăнта кăларнă «Свободовский» тĕслĕ элита класлă ама. 261 кг таяканскер 168 см тăршшĕ. Ăна 8 хутчен çăвăрлаттарнă, кашнинчех вăтамран – 14-шар çура. Инçех мар «Герой» хуçалăхран килнĕ «Цигайская» ăратлă сурăхсем хăйсене пăхнине кура çуллен 100 сурăх пуçне 102-103 путек, 4,6 кг çăм параççĕ.

Кăшт кайсанах «Ударник» хуçалăхăн хура-шурă ĕни, Суворов яч. хис. тата «Оринино» хуçалăхсен тынисем.




**«Ударник» хуçалăхран выставкăна пынă Е. Александрова выльăхсене куракансем умне илсе тухассипе палăрчĕ.**

Çак вăхăтра 10-12 уйăхри тынасене аренăра уттарса хак панине пĕтĕмлетрĕç: кĕмĕл медале «Оринино» хуçалăхăн тыни тивĕçрĕ. Хаклав питех те интереслĕ иртнĕ. Тынашкасем хыççăн унта ĕнесем, лашасем хутшăнчĕç.

Выставка пĕтĕмлетĕвĕ те çĕршывра «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ĕçленĕ чух Муркашсен малтуртăмлă пурăнма, ăратлă выльăхпа тухăçлă ĕçлесе экономикăра çĕнĕ ӳсĕмсем тума вырăнтах май пуррине кăтартрĕ.

– Муркашсем ăратлăх ĕçне сыхласа хăварни пире савăнтарать. Ку шайпах пырсан эсир çĕнĕ производство



**– «Тульские бойцовые» ăратлă хурсемпе пĕрремĕш çул мар ĕçлетĕп, – терĕ Р. Потапов ЧР ял хуçалăх министрне М. Игнатьева.**

ӳсĕмĕсем тăвасси те пирĕншĕн иккĕленӳллĕ мар, – терĕ ЧР патшалăх ветеринари службин ертӳçи В. Тихонов.

Выставкăра Муркашсен ăратлă выльăхĕсем нумай хисепе тивĕçрĕç. 14 номинацире дипломсемпе 41 пин тенкĕ укçан преми илсе республикăра пуринчен те маттуртараххисем пулчĕç. Уйрăммăн илсен, «Оринино» хуçалăхри 10-12 уйăхри тына 2-мĕш стапеньлĕ, 16-18 уйăхри тына 2-мĕш степеньлĕ, «Свобода» хуçалăхри ĕне 2-мĕш степеньлĕ дипломсене, «Герой» хуçалăхри «Цигайская» ăратлă сурăхсем 2-мĕш степеньлĕ тата çак хуçалăхри асăннă ăратăри така 1-мĕш степеньлĕ, Шурчасенех выставкăна пынă шурă пысăк ăратăри сысна ами 1-мĕш степеньлĕ дипломсене, «Свобода» хуçалăхри шурă пысăк ăратă никĕсĕ çинче кăларнă «Свободовский» тĕслĕ сысна аçи тата ку хуçалăхри çак ăратăн асăннă тĕсĕнчи сысна ами çурисемпе 1-мĕш степеньлĕ, кунтанах пынă çамрăк сысна аçисен ушкăнĕ 1-мĕш степеньлĕ дипломсене, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинчен илсе пынă çăмарта тумалли «Хайсекс белый» ăратăри чăхсем 1-мĕш степеньлĕ диплома, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри пысăк шурă сысна ăратин аçи 2-мĕш степеньлĕ, Суворов яч. хис. хуçалăхри пысăк шурă сысна ăратин çамрăк амисен ушкăнĕ 3-мĕш степеньлĕ дипломсене илчĕç. Вĕсемпе пĕрлех килти хушма хуçалăхра ăратлăхпа ĕçлекен Л. Капировапа Р. Потапов та 1-мĕш степеньлĕ дипломсене тивĕçрĕç. «Ударник» хуçалăхра 38 çул зоотехник-селекционер пулса ĕçленĕ Юлия Николаевна Тимофеева ăратлăхпа ĕçлекен «Чи маттур зоотехник-селекционер» ят илчĕ. Ку та Муркашсен савăнăçĕ.

Куратпăр, ăратлăхпа ĕçлемелли никĕс пирĕн хамăр районтах пур. Анчах хальлĕхе çакăнпа çителĕклĕ усă курни сисĕнмест-ха. Мĕншĕн тесен выльăхсен йышĕ палăрмаллах чакса кайрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**